Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

3 (7748) № ✻ Юн кун, 2010 çулхи январĕн (кăрлач) 20-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Малта пыракан ĕç коллективĕсенче

## Ырă шанăçпа вăй хураççĕ



*Эсир паянхи сăн ӳкерчĕкре Мăн Сĕнтĕр райповĕн ĕçченĕсене куратăр. Çулĕсемпе тата ĕç опычĕпе пăхсан вĕсем хушшинче пысăк уйрăмлăх пур пулин те, çак хастар хĕрарăмсем райпо аталанăвĕшĕн пĕр тĕллевпе ĕçленине хирĕçлеме çук. Çавнашкал тăрăшуллă ĕçченсене пулах ĕнтĕ юлашки çулсенче Мăн Сĕнтĕр райповĕн ячĕ республикăра кăна мар, Раççейре те ырăпа палăрса тăрать. Çавăнпа та кунти ырă опытпа паллашма ытти регионсенчен те килсе çӳренинчен тĕлĕнмелли çук. «Мăн Сĕнтĕр райповĕ – 1978 çултанпа манăн тĕп ĕç вырăнĕ. Çак туслă çемьере ытларах хаксем тăвассин экономисчĕ пулса вăй хунăран коллектив ĕçне алă тупанĕ çинчи пек курса тăратăп», – вашават калаçать иртнĕ кĕркуннеренпе райпо председателĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен çумĕнче вăй хума пуçлана Лариса Аркадьевна Смирнова (сăн ӳкерчĕкре сылтăмри). Виççĕмĕш çул кăна-ха райпо системинче бухгалтер пулса ĕçлекен Алина Волкована ĕçри хастарлăхне кура райпори профсоюз комитетне ертсе пыма шаннă. «Ĕçтешсем шаннине тӳрре кăларас тесе тăрăшатăп», – терĕ ĕç опытне аслă юлташĕсенчен алла илсе пыракан çамрăк хĕрарăм.*

*Сăн ӳкерчĕкĕн варринче эсир Мăн Сĕнтĕр райпо правленийĕн председательне Надежда Юрьевна Васильевана куратăр. Вăл ĕçтешĕсен тăрăшулăхĕпе кăмăллă. «Райпо Канашĕн ертӳçи Л. Майкова ĕç коллективне çĕнĕлĕхсене алла илме хавхалантарсах пырать. Эпир çак тăрăшулăха ăнланатпăр, çавăнпа ĕçе те ăнăçу çулĕпе илсе пыратпăр», – Çĕнĕ çул уявĕн савăнăçне пытармасăр калаçрĕ Н. Васильева.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Республикăра

## Çыхăнусем анлăланчĕç

Тунти кун Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров Правительство çуртĕнче Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин Çĕршывсен хушшинчи ĕçсен комитечĕн председательне Константин Косачева йышăннă.

Тĕл пулура çĕршывсен хушшинчи хутшăнусене, хăш-пĕр патшалăх посолĕсен визичĕсене йĕркелес енĕпе федераци саккунĕсен ыйтăвĕсене сӳтсе явнă. Чăваш Енĕн промышленноç тата ял хуçалăх предприятийĕсем, çавăн пекех республикăри вĕренӳ заведенийĕсем çав патшалăхсемпе çыхăну тытасшăн.

## Çĕнĕ хулана тăвасси хăвăртланать

Тунти кунах Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров ВТБ Банк АУО ертӳçисен представителĕсене – президент çумне – правлени председательне Андрей Пучкова тата аслă вице-президента Александр Ястриба йышăннă.

Калаçу вăхăтĕнче республика ВТБ Банк АУОпа çыхăну тытас, уйрăммăн илсен, Çĕнĕ хулара пурăнмалли çуртсем тăвассине хăвăртлатас ыйтусене сӳтсе явнă.

Райадминистрацире

## Пултаруллисене – Хисеп грамоти

***Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2009 çулхи декабрĕн 7-мĕшĕнчи 761 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Альбина Семеновна ДАШКОВАНА**, «Ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ» муниципаллă хушма вĕрентӳ учрежденийĕн тренер-преподавательне;

– **Юрий Анатольевич ЕРШОВА**, «Ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ» муниципаллă хушма вĕрентӳ учрежденийĕн тренер-преподавательне;

– **Светлана Вениаминовна ТРОИЦКАЯНА**, Шурча шкулĕн директорне;

– **Валентина Борисовна СУВОРОВАНА**, хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕн производствăпа техника пайĕн инженерне.

Православи уявĕсем

## Таса шывра

Январĕн 19-мĕшĕ Иисус Христос Турăна тĕне кĕртнĕ кун пулнипе паллă. Çак пысăк та чăннипех сăваплă уяв ячĕпе пĕтĕм чиркӳсенче ĕнер тата виçĕм кун кĕлĕсем иртрĕç.

Муркашра вакă касса шыва кĕрессине кăçал пĕрремĕш хут йĕркелерĕç. Муркаш чиркĕвĕн настоятелĕ Федор атте аслă кĕлĕ йĕркипе «Сывлăх» ФСК хыçĕнчи пĕве çинче каснă вакăри шыва тасатрĕ. Таса шыва вара 300 çынна яхăн кĕрсе тухрĕ. Вĕсен шутĕнче – район пуçлăхĕпе Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ те.

Çулсеренех таса шыва кĕрекенсен хисепĕ ӳссех пырать. Апла пулсан православи уявĕсем те пурнăçа çирĕпрех кĕрсе пыраççĕ.

**Хамăр инф.**

Кам епле ĕçлет?

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ЯНВАРĔН 19-МĔШĔ ТĔЛНЕ ПĔР ĔНЕ ПУÇНЕ МĔН ЧУХЛĔ СĔТ СУНИНЕ КĂТАРТНИ (килогрампа)**

**Колонкăсенче: 1. Кăçал сунă. 2. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан («–» – сахалрах).**

| | 1 | 2 |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 5,4 | -2,2 |
| «Восток» | 14,1 | 6,1 |
| «Герой» | 10,1 | -3,1 |
| Ильич яч. хис. | 12,4 | 0,0 |
| Ленин яч. хис. | 9,0 | 5,2 |
| «Оринино» | 14,1 | 3,8 |
| «Передовик» | 5,9 | 0,5 |
| «Свобода» | 10,6 | 1,3 |
| Суворов яч. хис. | 15,4 | 2,4 |
| «Ударник» | 10,9 | 0,2 |
| Чапаев яч. хис. | 6,1 | 3,3 |
| Чкалов яч. хис. | 6,9 | -5,3 |
| «Хлебороб» | 4,0 | 4,0 |
| РАЙОНĔПЕ | 10,8 | 1,3 |

**Сĕт хакĕ хресчене татах нумай такăнтарĕ-ши? Хуравĕ çук. Анчах çак хурав çине пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче сунă сĕт урлă пăхсан, çĕр ĕçченĕ ĕнерен «инçерех те инçерех тарса» пыни курăнать. Çулталăк хушшинче ĕнесен йышĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче 255 пуç чакнă. Паян пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче сумалли ĕнесен кĕтĕвĕ 2115 пуçран тăрать. Çакна пула хуçалăхсем эпир пăхнă кун пĕлтĕрхинчен 295 килограмм сĕт сахалрах сунă (22619 кг). Çав вăхăтрах пĕр ĕне пуçне талăксерен вăтамран тивекен сăвăм иртнĕ çулхинчен пысăкрах пулни упранса юлнă выльăхсемпе фермăсен ĕçченĕсем тухăçлăрах ĕçлеме мехел çитерни пирки калать.**

**А. БЕЛОВ.**

Ыр кăмăллăх

## Марафона хутшăнакансем йышланаççĕ

Ачасен ыр кăмăллăх марафонне хутшăнакан предприятисемпе организацисен йышĕ районта ытларах та ытларах. Çак вăхăта пĕтĕмпе ятарлă счет çине 58808 тенкĕ куçарса панă.

Вăл шутра район администрацийĕ (10455 тенкĕ), ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕ (1395 тенкĕ), ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин «Çынсене социаллă пулăшу паракан районти центрĕ» РГУ (1350 тенкĕ), РФ Пенси фончĕн районти управленийĕ (4168 тенкĕ), выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци (2640 тенкĕ), район администрацийĕн финанс пайĕ (1980 тенкĕ), ветерансен районти хорĕ (750 тенкĕ), «Пучах» ООО (3000 тенкĕ), «ВАСЕМ» ООО (2000 тенкĕ), районти тĕп больница (16930 тенкĕ), «Россельхозбанк» (1250 тенкĕ), çамрăк техниксен районти станцийĕ (2000 тенкĕ), «РГС-Поволжье» ООО (3000 тенкĕ), ЧР Финанс министерствин Муркаш районĕнчи пайĕ (500 тенкĕ), «Свобода» хуçалăх (3000 тенкĕ), районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ (1000 тенкĕ), Хорнуй ял тăрăхĕ (1490 тенкĕ), «Ника» ООО (1000 тенкĕ), пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ (900 тенкĕ). Малашне те ука-тенкĕ куçарса парас текенсем активлă пуласса шанатпăр.

Ача-пăчан тăхăнмалли тумтирĕпе пулăшакансем вара – 14 çын. Вĕсем Муркаш, Çатракасси, Калайкасси, Пăсăрман, Шаптак, Шетмĕпуç ялĕсенчен тата «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнчен.

**Хамăр инф.**

Вулакансене пĕлме

## Пособисем ӳсрĕç

Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх, 2009 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнчи 308 № Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн ачасем пур граждансем илсе тăракан пособисене кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен 10 процент чухлĕ ӳстерме пăхнă.

Çапла вара 2010 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа тĕрлĕ пособисен калăпăшĕ çакăн пек:

– организацие пĕтернипе ĕçсĕр юлнă хĕрарăмсене çие юлнипе тата ача çуратнишĕн паракан пособи 412 тенкĕ те 08 пус;

– çие юлнипе малтанхи тапхăртах больницăна учета тăнă хĕрарăмсене пĕр хутчен паракан пособи 412 тенкĕ те 08 пус.

Ача çуратнăшăн пĕр хутчен паракан пособи 10988 тенкĕ те 85 пуспа танлашрĕ.

Çулталăк çурăччен ачана пăхнăшăн паракан пособи виçисем çапла:

- пĕрремĕш ачана пăхăнăшăн – 2060 тенкĕ те 41 пус;

- иккĕмĕш тата хыççăнхи ачасене пăхнăшăн – 4120 тенкĕ 82 пус;

- çак пособин чи пысăк виçи – 8241 тенкĕ те 64 пус;

– çарта хĕсметре тăраканăн çие юлнă арăмне пĕр хутчен паракан пособи 17402 тенкĕ;

– çарта хĕсметре тăраканăн ачишĕн уйăхсерен паракан пособи 7458 тенкĕ.

Çапла вара кăçалхи январь уйăхĕнчен тытăнса пособисене çӳлерех асăннă виçесемпе тӳлеççĕ.

**Н. ПЕТРОВА,
Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ.**

Çар комиссариатĕнче

## Учета тăрасси пирки

Раççей Федерацийĕн «Çар тивĕçĕ тата çар служби çинчен» Федераллă Саккунпа тата Чăваш Республикин Президенчĕн хушăвĕпе килĕшӳллĕн 1993 çулта çуралнă яшсен 2010 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса мартăн 31-мĕшĕччен пуçламăш çар учетне тăмалла. Çавăнпа пĕрлех вăл е ку сăлтава пула çар учетне тăмасăр юлнă аслăрах ӳсĕмри арçынсен те саккунпа килĕшӳллĕн çар учетне çырăнмалла.

Халĕ каланине çирĕплетсе Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариачĕн пай пуçлăхĕ В. Андреев январĕн 14-мĕшĕнче «1993 çулта çуралнă яшсен тата вăл е ку сăлтава пула çар учетне тăмасăр юлнă аслăрах ӳсĕмри арçынсен 2010 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса мартăн 31-мĕшĕччен пуçламăш çар учетне тăрасси çинчен» приказ кăларнă.

Приказ епле пурнăçланнине призыв пайĕн пуçлăхĕ А. Ефимов тĕрĕслесе тăрĕ.

**Хамăр инф.**

ÇЫРĂНТАРУ

## Февраль уйăхĕнчен илсе тăма çырăнтараççĕ

**Хаклă вулакансем!**

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2010 çулхи февраль уйăхĕнчен илсе тăма çырăнтарас тапхăр вĕçленсе пырать. Çавăнпа та почтальонсемпе паян-ыранах тĕл пулма тăрăшăр.**

**Яланах пĕрле пулар!**